25-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 27 ВЫРСАРНИКУН 132(6369) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Çулйӗр строительствинче чи лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне парасси çинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чӑваш республикинчи çулйӗр уйӑхлӑхӗн 20 кунӗ хушшинчи ӗçсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ çулйӗр ӗçӗнче чи лайӑх тӗслӗхсене çак районсем кӑтартса панӑ тесе палӑртаççӗ: Етӗрне районӗ (райисполком председателӗ Спиридонов юлташ, ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Сомов юлташ), Калинино районӗ (райисполком председателӗ Иванов юлташ, ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Кудряшов юлташ, çулйӗр ӗçӗсене ертсе пыраканӗ Романов юлташ) тата Елчӗк районӗ (райисполком председателӗ Осипов юлташ, ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Волков юлташ).

Етӗрне районӗ уйӑхлӑхӑн 20 кунӗ хушшинче хӑйне панӑ задание çӗр ӗçӗсем енӗпе 71,3 процент пурнӑçа кӗртнӗ, çуран çынсем ӗçе тухмалли кулленхи нормӑна вӑтамран 133 процент тултарса пынӑ.

Калинино районӗ уйӑхлӑхӑн 20 кунӗ хушшинче чул турттармалли задание 172,6 процент, чул кӑларса хатӗрлес енӗпе—60 процент, çӗр ӗçӗсем енӗпе—52 процент пурнӑçланӑ.

Елчӗк районӗ июнӗн 23-мӗшӗ тӗлне çӗр ӗçӗсем енӗпе плана 70 процент, чул турттармалли задание 65 процент пурнӑçланӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ çапла йышӑнаççӗ:

1. Çулйӗр строительствинче чи лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата укçан преми илме тивӗçлӗ кандидатсем тесе Етӗрне, Калинино тата Елчӗк районӗсене йышӑнас.

2. Çулйӗр ӗçӗнче чи лайӑх ӗçленӗ района Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата укçаллӑ премие парассине уйӑхлӑх вӗçленнӗ хыççӑн (июлӗн 10-мӗшӗнче) тухса ирттерес.

3. Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ çулйӗр уйӑхлӑхӗн 20 кунӗ хушшинче Пӑрачкав, Канаш, Элӗк, Красноармейски, Кувакино, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Вӑрнар тата Октябрьски районсем пачах та çителӗксӗр ӗçленӗ тесе палӑртаççӗ, çав районсен руководителӗсене хӑйсене панӑ задание 1943 çулхи июлӗн 10-мӗшӗ тӗлне пурнӑçа кӗртме хушаççӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. МАТВЕЕВ. ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

Етӗрне районӗ çӗртме планне тултарчӗ

Республикӑра çӗртме тӑвас ӗç хӗрӳллӗн пулса пырать. Июнӗн 26-мӗшӗ тӗлне Етӗрне районӗ хура çӗртме тумалли плана пӗтӗмпех тултарчӗ. Район пӗтӗмпе 3.614 гектар çӗртме сухи сухаланӑ.

Етӗрне районӗ хире тислӗк кӑларас ӗçе те ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пырать. Июнӗн 26-мӗшӗ тӗлне район хире тислӗк кӑлармалли плана 104,3 процент тултарнӑ. Планпа хире 165 пин лав тислӗк кӑларма палӑртнӑ пулсан, район 172 пин лав ытла кӑларнӑ.

Шӑхасан МТС-ӗ комбайнсене юсаса пӗтерчӗ

Тырпулсене пухса кӗртме лайӑхрах хатӗрленессишӗн кӗрешсе, Шӑхасан МТС-ӗ июнӗн 26-мӗшӗ тӗлне комбайнсене капитальнӑй тата текущи ремонт тумалли плана пӗтӗмӗшпех пурнӑçа кӗртрӗ.

Чугунçул валли вутӑ хатӗрлемелли фронтовой вунӑкунлӑх

Вутӑ турттарассине вӑйлатмалла

Пирӗн республика чугунçул валли вутӑ хатӗрлес задание çулсеренех ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пынӑ. Анчах та кӑçалхи çурçул планне пурнӑçлас ӗç кая юлчӗ.

Паян саккӑрмӗш кун ӗнтӗ республикӑра чугунçул валли вутӑ хатӗрлес тӗлӗшпе фронтовой вунӑкунлӑх пырать. Ишлей, Элӗк, Сӗнтӗрвӑрри районӗсем вунӑкунлӑхӑн графикне пурнӑçланӑпа пӗрех. Сӗнтӗрвӑрри районӗ вутӑ хатӗрлес плана 102 процент пурнӑçларӗ. Кунта кулленех 107 çын ӗçлемелле пулсан, 191 çын тухса ӗçлет.

Хӑшпӗр районсенче вутӑ турттарас ӗç юлса пырать. Красноармейски районӗ вутӑ турттармалли плана июнӗн 24-мӗшӗ тӗлне 30,1 процент кӑна пурнӑçланӑ. Çавнашкалах Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав районӗсенче те вутӑ турттарасси çине кирлӗ пек çаврӑнса пӑхмаççӗ. Шӑмӑршӑ районӗ ку ӗçе тытӑнман та. Ку ӗнтӗ ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем чугунçул валли вутӑ турттарас ӗçе хакламаннинчен килет. Пӑрачкав районӗ пирки пӗрре çеç мар асӑннӑ ӗнтӗ. ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Б. Кукушкин юлташ—«Ӗлкӗрӗпӗр-ха; вӑхӑт пур»—тесе лӑпланса ларать.

Вунӑ кунлӑх вӗçленсе пырать. Анчах асӑннӑ районсем уйӑхлӑхӑн графикне çуррине те пурнӑçламан.

Вутӑ хатӗрленипе пӗрлех турттарассине те пӗр вӑхӑтрах тухса пымалла. Халӗ Чӑваш АССР Наркомлесӗн хатӗрлев предприятийӗсене пур транспорт вӑйӗсемпе те чугунçул валли вутӑ турттарас ӗçре усӑ курма ирӗк панӑ. Çавӑнпа та халӗ пур пек условисемпе усӑ курса, кашни районӑн, вӑрман хатӗрлев предприятийӗсен вунӑкунлӑхӑн графикне пурнӑçлассишӗн кӗрешмелле.

Хӗрсе вутӑ хатӗрлеççӗ

ЭЛӖК, июнӗн 26-мӗшӗ. (**Хамӑр корр., телефонпа**). Чугунçул валли вутӑ хатӗрлемелли вунӑкунлӑхӑн графикне район июнӗн 25-мӗшӗ тӗлне—хатӗрлес енӗпе 93,7 процент, турттарас енӗпе 93,1 процент пурнӑçларӗ. «Красный Октябрь», «Çутталла» колхозсем вутӑ хатӗрлесе турттарас заданине 100 процент ытла тултарчӗç. Фронтовой вунӑкунлӑхра районӗпе кашни кун çуран 63 çын ӗçлемелле, июнӗн 24-мӗшӗнчен 90 çын тухса пычӗç. Вутӑ хатӗрлес плана район çак кунсенчех пурнӑçлать.

Çулсене юсамалли уйӑхлӑх

Юлнӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курмалла

ШАХАСАН. Июнӗн 23-мӗшӗ. (**Хамӑр корр., телефонпа**). Матшу ялсоветӗнчи «Майӑн 1-мӗшӗ» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем çулйӗр ӗçӗнче кӑтартуллӑн ӗçлеççӗ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз çулйӗр валли чул кӑлармалли плана 102 процент тултарчӗ. «Новая жизнь» тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсем те çулйӗр уйӑхлӑхӗн графикне паян-ыранах тултараççӗ.

Анчах районра çулйӗр ӗçӗнче кая юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Память Ильича» колхозӑн 216 кубометр чул кӑлармалла пулсан, июнӗн 22-мӗшӗ тӗлне вӑл 12,2 кубометр çеç кӑларнӑ. «Березовка» колхоз çулйӗр ӗçӗн планне 35 процента яхӑн çеç пурнӑçланӑ. «Соревнование», «Красный Октябрь» тата «Герой» колхозсем те çулйӗр уйӑхлӑхӗн планне 50 процента яхӑн çеç тултарнӑ.

Çулйӗр уйӑхлӑхӗ пӗтсе пырать. Çак юлнӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курса, ӗçе лайӑхрах йӗркелесе ярса, вӑй ытларах хурса ӗçлесе, çулйӗр уйӑхлӑхӗн планне пур колхозсен те пӗтӗмпех тултармалла.

В. ВЕСЕЛОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 25-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 25-мӗшӗнче фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусем те пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗн хӑшпӗр участокӗсенче пирӗн пехотӑн вак ушкӑнӗсем тӑшман оборонин малти хӗррине разведка тунӑ. Пирӗн артиллерипе пехота гитлеровецсене пӗр рота таран вӗлерсе тӑкнӑ, 5 пулемет çӗмӗрнӗ, артиллери тата миномётсен темиçе батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Калинин фронтӗн пӗр участокӗнче пирӗн подразделенисем артиллери пенӗ хыççӑн тӑшмана атакӑланӑ та халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗçсем кун каçиччен виçӗ хутчен контратака тунӑ, анчах вӗсене калининчех, пысӑк çухатусем кӳрсе, каялла ывӑтса янӑ. Кунҫаҫа çав çапӑçусенче пирӗн подразделенисем 600 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшмантан 6 миномет, 100 винтовка ытла, 2 радиостанци тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Лисичанск районӗнче пирӗн артиллеристсем наблюдательсем тӑшман тӑнӑ вырӑна асӑрханӑ тӗлсене пенӗ. Артиллери çар грузӗ турттарса пыракан 3 автомашинӑпа 6 лава пӗтерсе тӑкнӑ, 2 блиндажа тата наблюдательнӑй пункта ишсе антарнӑ. Хуралра вӗçсе çӳрекен совет истребителӗсем тӑшман самолечӗсен ушкӑнне пӳлсе илнӗ те вӗсемпе çапӑçма тытӑннӑ. Пирӗн летчиксем 2 нимӗç самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланӑçнерехре совет летчикӗсем сывлӑшра пулса иртнӗ çапӑçусенче 6 нимӗç самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Гварди капитанӗ Алелюхин нимӗç бомбардировщикне персе ӳкернӗ. 2 летчика тыткӑна илнӗ. Гварди старши лейтенанчӗ Ершов, кӗçӗн лейтенант Михайлов тата старши лейтенант Головачев пӗрер самолет персе ӳкернӗ. Гварди лейтенанчӗ Ростырко тата гварди старши лейтенанчӗ Тарасов нимӗçсен «Мессершмитт—109» йышши 2 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пирӗн снайперсем 85 гитлеровеца вӗлернӗ. Совет артиллерисчӗсем нимӗç оборонин сооруженийӗсене персе 14 дзота, 12 блиндажа ишсе антарнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. Пӗр участокра пирӗн минометчиксем тӑшман пехотин пӗр çӗре пухӑнса тӑнине асӑрханӑ та пеме пуçланӑ. Нимӗçсем ӑçта килнӗ унталла тарма пуçланӑ. Пирӗн стрелоксене çакӑ кӑна кирлӗ пулнӑ. Снайперсем Наседкин, Бардуков, Кулаков, Приходько, Родионов тата Барановпа Совин 20 нимӗç салтакне вӗлернӗ.

* * *

Июньре малтанхи çур уйӑх хушшинче Украинӑри партизансен темиçе отрячӗ тӑшман çулйӗрӗсене чылай хутчен пыра-пыра çапнӑ. Подрывник-партизансем чугунçулсен чи кирлӗ участокӗсенче тӑшманӑн çынсем, çар техники тата горючи турттарса пыракан 25 эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Çав крушенисенче 173 вагон, 116 платформа, 124 автомашина, темиçе танк тата бензин тултарнӑ цистернӑсем çӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Поляк партизанӗсем 8 нимӗç офицерӗпе чиновникне вӗлернӗ. Ржешевра полякӗсене Германири каторгӑна ирӗксӗр ярса тӑрас ӗçе пӑхса тӑракан Германи Больвег ятлӑ нимӗçе вӗлернӗ. Радомра фашистла чиновнике Освальд Фрубуса вӗлернӗ. Радом сывӑхӗнче поляк патриочӗсем нимӗçсен боеприпассем турттарса пыракан поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Осьвенцим районӗнче хӗспӑшалланнӑ поляксен ушкӑнӗ ... нимӗç салтакӗсене турттарса пыракан поезда пенӗ.

* * *

Июнӗн 24-мӗшӗнче Берлинри радио çапла пӗлтернӗ: «Нимӗç войскисем фронтӑн Демянск районӗнчи участокӗпе çавӑн пекех тата Ильмень кӳллинчен кӑнтӑралларахра совет войскисен позицийӗсене атакӑланӑ. Çав атакӑсене пула вырӑссен оборона пункчӗсене тем чухлех тата блиндажӗсене нумай вӗлерсе тӑкнӑ, совет салтакӗсемпе офицерӗсене тыткӑна нумай илнӗ»,—тенӗ. Нимӗçсен çак пӗлтерӗвӗнче чӑнни пӗр сӑмах та çук. Ильмень кӳллинчен кӑнтӑралларахра ӗнтӗ чылайранпах лӑпкӑ тӑрать. Гитлеровецсем фронтӑн ку участокӗнче пӗр атака та туман, совет оборонин пӗр пунктне те пӗтермен, совет салтакӗсемпе офицерӗсене тыткӑна нумай та сахал та илме пултарайман та, илмен те. Кӗскен каласан, Берлинри радион çак пӗлтерӗвӗ вӑл пӗтӗмпех суя сӑмах пулса тӑрать.

Июнӗн 26-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 26-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусем те пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче пирӗн пехотӑн вак ушкӑнӗсем разведка тунӑ. Артиллери подразделенийӗн командирӗ — старши лейтенант Чечулин тӑшманӑн пиштӗ лайӑх пытарса лартнӑ миномет батарейине асӑрханӑ. Артиллеристсем персе 6 миномета расчечӗсемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Севск районӗнче нимӗç пехотин отрячӗ пирӗн оборона линине çапӑçса разведка тума хӑтланнӑ. Гитлеровецсем пралук карса тунӑ вырӑна сывӑхарсан, пирӗн пӗр чаçӑн боецӗсем вӗсене тӑшпалсемпе, пулеметсемпе пеме пуçланӑ. Нимӗçсен 40 салтакӗ вилнӗ, вара вӗсем каялла чакнӑ. Тепӗр участокра совет артиллерисчӗсем тӑшманӑн тӗрекленӗ пунктне пенӗ. Япаласен складне пӗтерсе тӑкнӑ, 4 тӗлте вӑйлӑ пушарсем тухнӑ.

* * *

Балаклейӑран кӑнтӑртарахра тӑшман пехотин ротти, лодкӑсем çине ларса, Çурçӗр Донецӑн сулахай енне каçма хӑтланнӑ. Пирӗн малти подразделенисем вӑйлӑн пеме пуçланӑ. Тӑшман пысӑк çухатусем тӳснӗ, вара тӗтӗм хӳттипе хӑйӗн малтанхи позицийӗсем патне чакнӑ.

* * *

Карели фронтӗнче пирӗн Миронов тата Лебедев капитансем ертсе пыракан боецсен икӗ ушкӑнӗ тӑшманӑн тӗрекленӗ пунктне атакӑланӑ. Совет боецӗсем тӑшман траншейисене вӑркӑнса кӗнӗ те гранатӑсем пӑрахса, штыксемпе чиксе, белофиннсене пӗр рота таран вӗлерсе пӗтернӗ. 10 землянкӑпа 2 дзота сирпӗнтерсе янӑ, минометсен 2 батарейипе, 6 станковӑй пулемета тата боеприпассем тиенӗ обоза пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Крымра кӗрешекен партизансен отрячӗсем юлашки вӑхӑтра тӑшманӑн 6 гарнизонне аркатса тӑкнӑ, темиçе çӗр гитлеровеца вӗлернӗ. Партизан-подрывниксен ушкӑнӗ нимӗçсен войскӑсем, техника тата çар пурлӑхӗ турттарса пыракан 11 эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗçсен 121-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Çар енне куçнӑ салтак, поляк Феликс Д. çапла каласа панӑ: «121-мӗш дивизире нимӗç çарне ирӗксӗр мобилизациленӗ поляксем, люксембуржецсем тата чехсем нумай. Эпир фашистла Германие тата гитлерла режима курайманни пире пурне те пӗрлештерсе тӑрать. Эпӗ хамӑн юлташсене çапла калаттӑм: «Пирӗн пӗр тӑшман пур, вӑл—нимӗçсем. Вӗсем пирӗнпе юнашарах. Пирӗн туссем—вырӑссем —фронт линийӗн леш енче тӑраççӗ. Эпир вӗсемпе пӗрле пулмалла», теттӗм. Çак кунсенче пирӗн полкри салтаксен пӗр ушкӑнӗ вырӑссен енне куçрӗ. Пирӗн хыçран ыттисем те пырӗç».

* * *

Нимӗç захватчикӗсем Пинск облаçӗнчи хӑшпӗр районсенче ӗçлеме пултаракан çынсене пурне те Германие каторгӑлла ӗçе яма мобилизацилеме хӑтланнӑ. Халӑхӑн пысӑк пайӗ вӑрмансене тарса саланнӑ. Гитлеровецсем темиçе çӗр совет çыннине тытнӑ. Арестленисене вагонсене хӑваласа кӗртнӗ те Германие илсе кайнӑ. Пӗр станци патӗнче партизансем чугунçула сирпӗнтерсе янӑ. Поезд çав тӗле пырса чарӑнсан совет гражданӗсем вагонсенчен сиксе тухнӑ та партизансемпе пӗрле кӗрешсе, нимӗç хуралне вӗлерсе пӗтернӗ, унтан тарса пытаннӑ.

* * *

Кӑнтӑр Македонин хӗвеланӑç пайӗнчи рай нӗсенче (Греци) Итали войскисемпе грек партизанӗсем хушшинче хаяр çапӑçусем пулса иртнӗ. Итальянецсен пӗр пин салтакпа офицера çити вилнӗ е аманнӑ. Партизансем 600 винтовка тата боеприпассем тиенӗ грузовик тытса илнӗ.

ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАН АЭРОДРОМӖСЕМ ÇИНЕ ТАТА ОРША ЧУГУНÇУЛ УЗЕЛӖПЕ КАРАЧЕВ СТАНЦИЙӖ ÇИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

Июнӗн 25-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн инçене вӗçекен авиаци тӑшман аэродромӗсене тата Орша чугунçул узелӗпе Карачев станцине тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула аэродромсенче чылай нимӗç самолечӗ пӗтнӗ е сиенленнӗ.

Тӑшманӑн Орша чугунçул узелӗ çинчи эшелонӗсем çине тата Карачев чугунçул станцийӗн районӗнче вырнаçнӑ боеприпассен склачӗсем çине бомбӑсем питӗ ӑнӑçлӑн пӑрахнӑ. Пушарсем нумай тухнӑ, пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ. Пирӗн 3 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

Нимӗç самолечӗсем Ленинград çывӑхӗнчи халӑх пурӑнакан пунктсене тапӑнни

Июнӗн 24-мӗшӗнче кӑнтӑрла нимӗç самолечӗсем Ленинград çывӑхӗнчи халӑх пурӑнакан 2 пункта тапӑнма хӑтланнӑ. Пирӗн истребительсем тӑшман самолечӗсене хирӗç вӗçсе тухнӑ та объектсем патӗнчен хӑваласа янӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери 12 нимӗç самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 5 самолет пӗтнӗ.

ВЛКСМ Обкомӗн VII-мӗш пленумӗ

Июнӗн 24—25-мӗшӗсенче Шупашкарта Советсен Çуртӗн ларусем пулакан залӗнче ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн черетлӗ VII-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ.

Пленум виçӗ ыйту сӳтсе яврӗ: çураки итогӗсем тата комсомолӑн республикӑри организацийӗсен тырпулсене пӑхса çитӗнтерес, вӗсене пухса кӗмме тата ялхуçалӑх продукчӗсен хатӗрлевӗсене ирттерме хатӗрленес ӗçсенчи задачисем çинчен; республикӑра комсомола илес ӗç мӗнле пулса пыни çинчен тата организациллӗ ыйтусем.

Пленума ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ Михайлов юлташ уçать.

Президиумра — ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсем Чарыков, Белков, Лисин юлташсем, ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗсемпе бюро членӗсем.

Михайлов юлташ пӗрремӗш ыйтупа доклад тума ВКП(б) Обкомӗн секретарьне Белков юлташа сӑмах парать.

Белков юлташ кӑçалхи çуракине хатӗрленсе ирттерес ӗçе республикӑри комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксем активлӑн хутшӑнса ӗçлени çинчен тӗплӗн каласа парать.

Çуракине уйрӑмах Шупашкар, Вӑрнар районӗсенчи комсомолецсемпе çамрӑксем активлӑн хутшӑннӑ. Шупашкар районӗнче çӗршер комсомолец çуракинче сухаçӑсемпе сӳрелекенсем тата акакансем пулса ӗçленӗ. Елчӗк, Куславкка, Красноармейски МТС-ӗсенчи чылай комсомолецсемпе комсомолкӑсем сезонри плана пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе мухтава тивӗç ӗçленӗ.

Анчах комсомолӑн Кувакино, Пӑрачкав, Сӗмӗрле, Чкаловски, Улатӑр, Вӑрмар, Тӑвай районӗсенчи организацийӗсем çамрӑксене çураки ӗçӗсене активлӑн мобилизацилеймен. Комсомолӑн асӑннӑ райкомӗсем тата вӗсен секретарӗсем массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе начар йӗркеленӗ.

Белков юлташ çум çумлас, ирхи çӗртме тӑвас, утӑ çулас, силос хывас, уборка машинисемпе, транспорт инвентарӗсене хатӗрлес тата ытти ӗçсем çинчен чарӑнса тӑчӗ, унтан комсомол организацийӗсем умне практикӑллӑ ӗçсемпе конкретнӑй задачӑсем кӑларса тӑратрӗ.

Пӗрремӗш ыйтупа пренире Владимирова (Шупашкар районӗ), Гвоздкова (Сӗнтӗрвӑрри), Гусева (Сӗнтӗр), Бурашников (Етӗрне), Васильев (Калинино); Старостина (Шӑмӑршӑ), Арлашкина, Чугунов, Ермакова (Улатӑр), Николаева (Первомайское), Алексеев (Чкаловское), Петрова (Октябрьское), Давыдова (Сӗнтӗр), Кириллова (Куславкка), Павлова (Канаш) юлташсем, Калинцевпа Пельцих юлташсем (Чӑвашсен ялхуçалӑх институчӗ) тухса каларӗç. ВЛКСМ Обкомӗн пропаганда енӗпе ӗçлекен секретарӗ Л. Михайлов юлташ кӑçалхи çураки вӑхӑтӗнче комсомол организацийӗсем массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе мӗнле йӗркелени çинчен чарӑнса тӑчӗ.

Иккӗмӗш ыйтупа—республикӑра комсомола илес ӗç мӗнле пулса пыни çинчен—ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ П. Михайлов юлташ доклад турӗ. Вӑл комсомолӑн республикӑри организацийӗ кӑçал комсомола илес ӗçе чылай лайӑхлатнине палӑртрӗ.

Кӑçалхи ултӑ уйӑх хушшинче Ленинла-Сталинла комсомол ретне пурӗ 9.221 çамрӑка илнӗ. ВЛКСМ Обкомӗн V-мӗш пленумӗн тата ВКП(б) Обкомӗн XIV-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑçа кӗртсе, комсомолӑн Комсомольски, Октябрьски, Етӗрне, Шупашкар райкомӗсем, Хорычева юлташ ЦК ВЛКСМ комсоргӗ пулса ӗçлекен заводри, Ишлей МТС-ӗнчи организацийӗсем лайӑх ӗçленӗ.

Пленум çакӑнпа пӗрлех комсомола илес ӗç республикӑра пӗтӗмӗшпе илсен, çителӗксӗр пулса пынине палӑртрӗ. Комсомол организацийӗсен хисепӗ чакса пырать. 1941 çулхи июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне республикӑра пуçламӑш организацисем 2.433 шутланнӑ пулсан, халӗ 2.223 çеç юлнӑ. Пленум комсомола илес тӗлӗшпе уйрӑмах ВЛКСМ Йӗпреç, Кувакино, Пӑрачкав, Хӗрлӗ Чутай, Первомайски, Чкаловски, Елчӗк райкомӗсем начар ӗçленине палӑртса хӑварчӗ.

Ку ыйтупа прениссене 12 çын хутшӑнчӗç: Андреев (Сӗрпӳ), Трусов (Шупашкар хули), Скрынник (Канаш), Семенова (Советски), Спичков (Улатӑр хули), Смирнова (Шупашкар), Степанова (Калинино), Бродоцкая (Н-ски завод ри комсорг), Залевский (Вӑрмар), Рябчикова, Третьяк (Улатӑр) т. ыт. те.

Пленумра ВКП(б) Обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Чарыков юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ.

Чарыков юлташ комсомолӑн республикӑри организацийӗсем умӗнче тӑракан черетлӗ задачӑсем çинчен тӗплӗн чарӑнса тӑчӗ. Вӑл ВЛКСМ райкомӗсемпе пуçламӑш организацисен секретарӗсен тата пленум членӗсен ӗçӗнчи çитменлӗхсем вӗсем район тата пуçламӑш организацисен ӗçне тӗплӗн пӗлменнинчен килнине нумай тӗслӗхсемпе сирӗплетсе пачӗ. Комсомолӑн ертсе пыракан работникӗсем агротехника тата ялхуçалӑх машинисен усси çинчен чылай калаççӗ. Хӑйсем машинӑсене пӗлмеççӗ, вӗренме те тӑрӑшмаççӗ, агротехника правилисене пурнӑçа кӗртмеççӗ. Комсомолецсем чылай çӗрте кок-сагыза шефа илмен. Çавӑнпа ӑна пӑхса çитӗнтерес ӗç мӗнле пулса пынипе комсомолецсем çителӗксӗр интересленеççӗ.

Чарыков юлташ ВЛКСМ райкомӗсен секретарӗсем пуçламӑш организацисенче сайра хутра çеç пулнине, вӗсем пуçламӑш организацисен секретарӗсене кирлӗ пек ертсе пыманнине кӑтартса парать.

Чарыков юлташ малалла ВКП(б) райкомӗсем комсомол организацийӗсене çителӗксӗр пулӑшса пыни çинчен калать. Çавна пула хӑшпӗр комсомол организацисем çителӗксӗр ӳсеççӗ.

Чарыков юлташ пленум участникӗсене ВЛКСМ Обкомӗн VII-мӗш пленумӗ палӑртнӑ çитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме, комсомол организацисен ӗçне лайӑхлатма чӗнчӗ.

Пленум пур ыйтусем тӑрӑх та тивӗçлӗ решенисем йышӑнчӗ.

Пленум Р. Ф. Хасьянов юлташа, вӑл Хӗрлӗ Çар ретне кайнӑ пирки, ВЛКСМ Обкомӗн çарӗç енӗпе ӗçлекен секретарӗн обязанноçӗнчен хӑтарчӗ. ВЛКСМ Обкомӗн çарӗç енӗпе ӗçлекен секретарӗ пулма Г. И. Петрухин юлташа çирӗплетрӗ, ӑна ВЛКСМ Обком пленумӗн тата бюро членӗсен составне кӗртрӗ.

ВЛКСМ Обкомӗн шкулсем енӗпе ӗçлекен секретарӗ А. Ф. Башкирова юлташ урӑх ӗçе куçнӑ пирки пленум ӑна ӗçрен хӑтарса бюро членӗнчен кӑларчӗ; ВЛКСМ Обкомӗн шкулсем енӗпе ӗçлекен секретарӗ пулма А. М. Токарев юлташа çирӗплетрӗ, ӑна ВЛКСМ Обком пленумӗн членне тата бюро составне кӗртрӗ.

Пленум ВЛКСМ Обкомӗн хресчен çамрӑкӗсен пайӗн заведующине—А. М. Кузнецова юлташа; чирлӗ пирки, ӗçрен хӑтарчӗ тата бюро членӗнчен кӑларчӗ.

Е. С. Васильева; Н. Н. Петрова юлташсене, урӑх ӗçе куçнӑ май, ВЛКСМ Обкомӗн бюро составӗнчен кӑларнӑ. ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн секретарьне Е. К. Трусова юлташа ВЛКСМ Обком пленумӗн тата бюровӗн членне кӗртнӗ.

Комсомолецсем производствӑра малта пыраççӗ

Челюков плавнӑй инженер пулса ӗçлекен заводра комсомолецсенчен 60 проценчӗ стахановецсем, 40 проценчӗ ударниксем пулса тӑраççӗ. Нормӑна тултармасӑр ӗçлекен пӗр комсомолец та çук. Комсомолецсенчен 39 фронтовой бригада организациленӗ. Бригадӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса янӑ. Ӑмӑртура уйрӑмах Ф. Наумов ертсе пыракан 16-мӗш бригада малта пырать. Бригада кулленхи нормӑна 240—255 процент тултарса пырать. Тӑрӑшса ӗçленине пула ӗнтӗ çак бригада ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ.

Производствӑра тӑрӑшса ӗçлекен 22 комсомолец ЧАССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине илчӗç. Вӗсем хушшинче Гурьева, Никифорова юлташсем ӗç нормине виçӗ хут ытла тултарса ӗçлеççӗ.

Рационализаторла сӗнӳсем парас ӗçре те комсомолецсем активлӑн хутшӑнса ӗçлеççӗ. Швачкова Петрушкин мастерсен сӗнӗвӗсемпе усӑ курни заводра вуншар пин тенкӗ тупӑш панӑ.

Комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗçе авал туса пыраççӗ. Комсомолец агитаторсем çамрӑк рабочисене каннӑ вӑхӑтра хаçат-журналсем вуласа параççӗ. Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене тата тӗнчери лару-тӑру çинчен çырнӑ заметкӑсене ӑнлантарса параççӗ. Эрнере пӗрре тӗрлӗ темӑсемпе, рабочисене интереслентерекен темӑсемпе, калаçусем туса ирттереççӗ. Ку ӗçре уйрӑмӑнах Малявка, Крылова, Филиппова, Протопопова юлташсем авал ӗçленине палӑртса хӑвармалла.

Комсомол организацийӗ парти организацийӗпе пӗрле «Ракета» ятлӑ стена хаçачӗ кӑларса тӑрать. Стена хаçатӗнче уйрӑм стахановецсен ӗç опычӗсене çутатса паракан, цехсем, мастерскойсем, сменӑсем, уйрӑм рабочисем хӑйсем çине илнӗ обязательствӑсене мӗнле пурнӑçласа пыни çинчен çырнӑ заметкӑсем пичетленеççӗ. Çавӑн пекех хаçатра заводри çитменлӗхсене те çутатсах тӑраççӗ. Çитменлӗхсем çинчен çырнӑ материалсене комитет заседанийӗнче сӳтсе яваççӗ. Çапла, «Ракета» июнь уйӑхӗн малтанхи кунӗсенче тухнӑ номерӗнче столовӑй япӑх ӗçлени çинчен, унӑн работникӗсем хӑйсен ӗçне сӳрӗккӗн туса пыни çинчен çырнӑ пулнӑ. Çак ыйтӑва комитет заседанийӗнче сӳтсе явса, ӗçе тӳрлетес енӗпе кирлӗ мерӑсем йышӑннӑ. Халӗ столовӑй малтанхинчен чылай авал ӗçлет.

Комсомолецсем хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне хӑпартма тӑрӑшаççӗ. Комсомолецсенчен нумайӑшӗ «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тимлӗн вӗренеççӗ. Сахалтарах вӗреннӗ рабочисем валли парти историне вӗренме уйрӑм кружок организациленӗ. Паянхи куна тӗлне виçӗ заняти туса ирттернӗ.

И. КРАСНОВ.

Квартал планне срокчен тултарчӗç

СӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Мыслецри ялпо иккӗмӗш квартал планне срокченех тултарчӗ. Иккӗмӗш номерлӗ магазинри продавщица Савельева юлташ II-мӗш квартал планне 142 процент, Богозабылова юлташ 137 процент тултарчӗç.

Мыслец ялповӗн магазинӗсем тасалӑх енчен те малта тӑраççӗ. Таварсене яланах йӗркеллӗ, таса вырӑнта тытаççӗ.

Укерчĕк çинче: пирĕн земляк старшина Василий Кузьмич **Тарасов** (сулахайра) тата ефрейтор Александр Васильевич **Николаев** (сылтăмра). Çапăçусенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Тарасов юлташа «За боевые заслуги» медальпе, Николаев юлташа «За отвагу» медальпе наградăланă.

П. СОТНИКОВ фотоукерчĕкĕ.

Фронт валли кадрсем хатĕрлетпĕр

Эпир пĕр хулара фронт валли çирĕп те паттăр, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен оруди командирĕсем вĕрентсе хатĕрлетпĕр. Пирĕн полк темиçе çĕршер командирсем, вăл шутран эпĕ хам 125 ассистик-командир вĕрентсе кăларса фронта ăсатнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ халĕ батарея старшинисем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн пата фронтран тав туса çырусем çыраççĕ. Çав командирсенчен нумайăшне орденсем панă.

Пирĕн умма правительство пысăк хăвăртлăхпа кадрсем хатĕрлес задача лартнă. Çав задачăна пурнăçлассишĕн куçне-çĕрне пăхмасăр ĕçлетпĕр.

Эпир вĕрентнĕ командирсенчен чăваш ачисем те сахал мар. Вĕсем ăнланмасăр ан юлччăр тесе, ванятисем хыççăн тăван чĕлхепе ăнлантаратпăр. Çапла ĕçленине пула, чăваш ачисем те отлично вĕренчĕç. Эпир малалла та хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен, тăшман самолечĕсене курсанах персе антарма пултаракан командирсем вĕрентсе кăларма сăмах паратпăр.

Ст. сержант И. ФЕДОРОВ.

Ĕçри чăрмавсене халех пĕтермелле

ВАРМАР. (**Хамăр корр.**). Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика (директорĕ Горбунов) производство планне кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Фабрика коллективĕ апрель уйăхĕнчи плана 220 процент, май уйăхĕнчи плана 120 процент пурнăçларĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне фабрика çур çулхи плана 111,7 процент пурнăçларĕ. Машина цехĕн (начальникĕ Лазарев) коллективĕ мĕн-рамăнах паха тĕслĕхсем кăтартать.

— Эпир плана виçĕ-тăватă хут та ирттерсе тултарма пултаратпăр. Анчах пирĕн ĕçре ситменлĕхсем те чылай, — тет машина цехĕн начальникĕ.

Чăн та, фабрикăна чĕртавар ситтерсе тăрттарса килнипе машина цехĕнчи станоксем 30 процентчĕ усăсăр, ĕçсĕр тăраççĕ.

Çакнашкал ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе фабрика дирекцийĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, рабочисене тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла.

О. ВЕСЕЛОВ.

Республика уйхирĕсенче

Пур ĕçре те малта

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Вырăс Сурăмĕнчи «Доброволец» колхоз кăçалги çурлакине пысăк пахалăхпа, кĕске вăхăтра туса пĕтерчĕ. Плана 106 процент тултарчĕ, 60 процентне сеялкăпа акрĕ.

Колхоз членĕсем вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн çум çумлама, тислĕк тăкма тата çĕртме сухи тума тытăнчĕç. Пур ĕçе те вăхăтра, организованно туса пыма тăрăшаççĕ.

Халь тырпул пухса кĕртме хатĕрленеççĕ. Паянхи куна 2 жнейка юсанă, тетрине те ситес кунсенчех юсаса пĕтереççĕ, 120 çава туптаттарнă, 200 çурла шăллаттарнă, ут тавраşĕсем ситтелĕклĕ, урапасем юсавлă.

Июнĕн 24-мĕшĕнче кунта колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Ку пухура тырпул пухса кĕртес ыйту тăчĕ. Пуху ку енĕпе хăлшĕр бригадăсенче ситменлĕхсем пуррине палăртрĕ, вĕсене колхозниксем хăвăрт пĕтерме пулчĕç.

Колхоз паян утă çулма тухса кайрĕ.

Лайăх ĕçлекенсенчен пример илмелле

КАНАШ. Ямаккасинчи Доронин ячĕпе тăракан тата «Красная звезда» колхозсем ирхи çĕртме тăвас ĕçе аван организацилерĕç. Доронин ячĕпе тăракан колхоз 150 гектар, «Красная звезда» колхоз 120 гектар çĕртме пурĕç, хăйсен планне тултарчĕç.

Ку икĕ колхозра та пĕчĕк ачасем çуллахи вăхăтра яслисенче пурăнаççĕ. Вĕсен амăшĕсене ĕçе тухма чăрмантаракан никам та çук, çавăнпа та колхозницăсем кашни кунхи ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ. Çак колхозсенче çĕртме сухи тунă вăхăтра та пĕрлешӳллĕ столовăй ĕçлерĕ.

Çав вăхăтрах кӳршĕри «Ударник» колхоз (председателĕ Е. Константинов), «Комбайн» колхоз (председателĕ Иванов) çĕртме тума тытăнманпа пĕрех. Вĕсенче, ĕç дисциплини начар пирки, колхозниксем колхоз ĕçне япăх тухаççĕ. Правленирен ыйтмасăрах ăста каяс тенĕ çавăнта каяççĕ, мĕн ĕçлес тенĕ çавна ĕçлеççĕ.

Канаш райсовечĕн исполкомĕпе райçĕрĕç пайĕн ку колхозсем çине халех çавăрăнса пăхмалла.

И. МАКСИМОВ.

Ĕçкунĕсен минимумне тултарассишĕн тăрăшмаççĕ

КАЛИНИНО. Партипе правительство колхозри кашни ĕçлеме пултаракан колхозникпе колхозницăнах çулталăк хушшинче ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне çирĕплетсе, кăтартса панă. Çак постановление вăхăтра та, та йĕркеллĕ пурнăçласа пыни колхозри дисциплинăна çирĕплетмелли тĕп май пулса тăрать.

Июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне кашни ĕçлеме пултаракан колхоз членĕн 30 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла. Анчах та Уйкас Явăшри Калинин ячĕпе тăракан колхозра ĕçкунĕсен минимумне колхозниксем еплерле тултарса пынипе интересленмеççĕ. Ĕçкунĕсене тĕрĕс учета илсе пымаççĕ.

Çавна пула колхозра миçе колхоз членĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарнипе тултарманнине пĕлмеççĕ, вĕсене минимума тултарма пулăшмаççĕ. С. Скворцов юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригадăра 22 вăйпитти колхоз членĕ июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне минимума тултарман.

Семенова Варвара—бригадăри ĕçлеме пултаракан 30 çула çитнĕ вăйпитти колхозница. Ĕçре чăрмантаракан ача çук, килти ĕçсене ватă амăшĕ те йĕркелет. Анчах бригадир хушнă ĕçсенчен вăл пăрăнса çӳрет. Кăçал вăл мĕнпурĕ те 4,30 ĕçкунĕ кăна ĕçлесе тунă. Çавăн пекех Елена Полякова та 2,56 ĕçкунĕ, М. Орлов 6,35 ĕçкунĕ, унăн арăмĕ М. Орлова 5,25 ĕçкунĕ çеç ĕçлесе тунă.

Халĕ колхозăн çĕртме 170 гектар сухаламалла. Çум çумламалла, уя тислĕк кăлармалла. Çав ĕçсене тума паян кун та тытăнман. Кунта дисциплинăна çирĕплетмелле. Тумалли ĕçсене халех тума тытăнмалла.

Г. МАТВЕЕВ.

Старши конюхсен канашлăвĕ

ЭЛĔК. (**Хамăр корр.**). Çак кунсенче лаша ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан «Сталинит» колхозра старши конюхсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта лашасене пăхас ĕç мĕнле пыни çинчен куçсе явăрĕç.

Ку ыйту тăрăх уйрăм колхозсен председателĕсемпе старши конюхсем хăйсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

— Эпир лаша фермине 1935 çулта организацилерĕмĕр. Çав çултан пуçласа вара пирĕн колхозра лашасен йышĕ ӳссех пычĕ. 1936 çулта 16 кĕсререн 16 тиха илнĕ. 1937 çулта та кашни кĕсререн пĕрер тиха илтĕмĕр. Çавăншăн Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче эпĕ кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пултăм, терĕ Тавăтри «Сталинит» колхоз председателĕ Ф. Емельянов.

Ку колхоз лашасен йышне ӳстерес, вĕсене мăнтăр тытас тĕлĕшпе чăнниипех кăтартуллă ĕçлет. Конюхсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çара сахал мар лаша панă.

«Октябрь» колхозри старши конюх Иванов юлташ лашасене лайăх пăхса усрани май вĕсем мĕнле ĕçре те ывăнманни çинчен каласа кăтартрĕ.

Çавăн пекех Вылăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри старши конюх Константинов, Хирлеппуçĕнчи «Красный Октябрь» колхозри старши конюх Иванов юлташсем те канашлура хăйсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Район кăçал лашасем ĕрчетмелли плана 100,2 процент тултарнă.

Утă çулас ĕç аван пырать

ЭЛĔК. (**Телефонпа**). Районра утă çулас ĕç сарăлсах пырать. Ку ĕçе кашни колхоз, кашни бригада тыра вырма тухиччен лайăх туса ирттерме тăрăшать.

Чăваш Сорăмĕнчи «Серп и молот» колхоз клевер çулса пĕтерчĕ. Халĕ вăл улăх утти çулма тытăнчĕ. Ку колхоз паянхи куна 3 гектар, Вутланти «Большевик» колхоз 12 гектар, Ураскилтри «Маяк» колхоз 6 гектар çулнă.

Çавăн пекех Хирлепуçĕнчи «Красный Октябрь», Ехремкассинчи «1-ое мая», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те утă çулас ĕçе организованно туса пыраççĕ.

Х. ЛИСИН.

Районри хаçатсене пăхса тухни

Предприятисен ĕçне тĕплĕнрех пĕлсе тăмалла

Çĕмĕрле районĕнче, ытти районсемпе танлаштарсан, промышленность пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Районри «Социализмлă ĕç» хаçат хăйĕн страницисенче промышленность ыйтăвĕсене мĕнле çутатса тăрать-ха?

1943 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа июнĕн 6-мĕшĕччен 21 номер тухнă. Çав вăхăт хушшинче хаçат промышленность ыйтăвĕпе 25 заметка панă. Унта пуринчен ытларах заводсемпе предприятисен ситĕнĕвĕсем çинчен çырнă. «Социализмлă ĕç» хаçат тăрăх илсен, Çĕмĕрле районĕнче производство планне тултарса пырайман предприятисемпе учрежденисем çук. Хаçата вулакан кунта пур предприятисем те пит-тикĕс ĕçлеççĕ теме пултарать. Хаçатăн кашни номерĕнче тенĕ пекех пĕр евĕрлĕ статьясем пичетленсе тухаççĕ. Статьясенче час-часах пĕр пек предложенисем темиçе хутчен те пĕл пулаççĕ. Хаçат производствăри стахановецсемпе ударниксен паха опытне ытти рабочисем патне çитерес ыйтупа нимĕн те çырмасть.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи март уйăхĕнче хаçатсем промышленность предприятийĕсен ĕçĕсем çинчен ситĕлĕксĕр çутатса тăнине уйрăмăнах асăрхаттарчĕ. «Социализмлă ĕç» хаçат кун хыççăн та хăйне кирлĕ пек вывод туман. Вăл районри промышленность предприятийĕсен ĕçĕсем çинчен çиелтен кăна çутатса тăрать. Çакă вара хаçатăн тĕп ситменлĕхĕ пулса тăрать.

Предприятисенче агитациллĕ ĕç мĕнле пулса пыни çинчен кăçал хаçат пĕрре те асăнман. Стахановла шкулсем çинчен, заводра техникăна вĕреннес ĕç мĕнле пыни çинчен пĕр статья та паман. Мартăн 14-мĕшĕнчи хаçатра «За первенство в предмайском соревновании» ятлă умстатья панă. Статьяра пĕр «Большевик» завод çинчен асăннипех лăпланнă.

Хаçатра уйăх каярах юлса çырнă материалсем те тĕл пулаççĕ.

ВКП(б) райкомĕ хăйĕн хаçатне кулленех ертсе пыни курăнмасть-ха. Хаçат редакторĕн Антонов юлташăн хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатмалла, предприятисен ĕçне тĕплĕнрех пĕлсе тăмалла.

УЗБЕКИСТАНРА ТЫРĂ ВЫРАÇÇĔ

ТАШКЕНТ, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Узбекистан уйхирĕсенче тĕштырăсене массăллăн вырма пуçланă. 183 пин гектар тыра çулнă, вăл шутран 63.200 гектарне Кашка-Дарья облаçĕнче çулнă.

Колхоз хирĕсенче 900 комбайн ытла ĕçлет. Июнĕн тăваттăмĕш пилĕккунлăхĕнче тырра унччен пилĕккунлăхра çапниччен виçĕ хут çурă ытла çапнă.

Пур çĕрте те вăйлă ӳсĕ пулнă курăксене çулса пуçтараççĕ. 130.000 гектар ытла утă çулнă. Люцернăна пĕрремĕш хут çулса пуçтармалли плана июнĕн 4-мĕш пилĕккунлăхĕ пĕтнĕ тĕле 44.5 процент пурнăçланă.

Планран ирттерсе хываççĕ

КАЛИНИНО. (**Телефонпа**). Колхозсенче силос хывас ĕç юлашки кунсенче вăйлăланчĕ. Нумай колхозсем хăйсен планĕнчен ирттерсе хывма тăрăшаççĕ.

Эльменри А. С. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз план тăрăх 90 тонна силос хывас вырăнне 150 тонна хыврĕ. Чалăм Кăкшăмри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 75 тонна хыврĕ, хăйĕн планне кĕске вăхăтрах пурнăçларĕ.

Силос хывасси халь ытти колхозсенче те хĕрӳллĕн пырать.

В. ЗАЙЦЕВ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтерни тăрăх, ĕнер союзниксен авиацийĕ тăшманăн Францири, Бельгири тата Голландири аэродромĕсене, промышленность тата чупунçул объекчĕсене атакăланă. Голландипе Çурçĕр Францие кăна илсен те, вĕсене тапăнма 400—500 самолет вĕçсе пынă. Операцисем тунă район Голландири Флиссингонран пуçланать те Францири Контантен çурутравне ситиччен пырать. Бомбăсем пăрахнă объектсенче пуринче те вăйлă пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине палăртнă.

Июнĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем Хĕвеланăç Германие каллех тапăннă.

Эльберфельда пуринчен те вăйлăрах тапăннă. Хулана пысăк сиен кӳнĕ.

Англи самолечĕсем Рурта чылай объектсене атакăланă, тăшман шывĕсенче минăсем пăрахса тухнă. Çак мĕнпур операцирен 35 самолет каялла таврăнман.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче июнĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Сардинипе Сицили утравĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăнне 20 самолет персе ӳкернĕ.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсем ĕнер Салоникăри аэродрома тапăннă. Бомбăсем 3 ангар çине тĕл ӳкнине палăртнă, горючи складне вут хыпса илнĕ.

АНГЛИ ДОМИНИОНĔСЕМ ВĂРÇА ХУТШĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви Англи доминионĕсем çак вăрçа хутшăнса кĕрешни çинчен хăшпĕр даннăйсене пĕлтернĕ. Австралин хĕçпăшаллă вăйĕсенче 800.000 çын ытла шутланать. Австрали çĕршывĕнче 50 завод хĕçпăшал туса кăларать.

Австралире вăрçăччен пĕр автомобиль те туса кăларман. Халĕ унта суднăсем, самолетсем, танксем, тупăсем тăваççĕ.

Çĕнĕ Зеландия экспедициллĕ корпуса 70.000 салтак панă. Нью-Фаундлендăн экспедициллĕ вăйĕсем 6.000 салтакран тăраççĕ. Кунта подводнăй лодкăсемпе кĕрешмелли орудисем туса кăлараççĕ.

Канадăн тинĕс-çар флочĕ хальхи вăхăтра Англирен Америкăна Атлантика океанĕ урлă каякан суту-илӳ суднисен çуррине хуралласа пырать.

Вăрçă пуçланнă чух Канадăн тинĕс-çар флотĕнче мĕнпурĕ те 15 судно кăна пулнă, вĕсенче 1.744 çын тăнă. Халĕ Канада флотĕнче ĕнтĕ 500 судно шутланать, вĕсенче 55.000 çын тăрать.

АНГЛИ КОРОЛĔ АНГЛИЕ ТАВĂРĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет. Англи королĕ VI Георг Çурçĕр Африкăпа Вăтаçĕр тинĕс районĕнче пулса çӳренĕ хыççăн Англие таврăннă.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔ ОККУПАНТСЕН ĔÇĔСЕНЕ ПĂЧЛАНТАРСА ПЫРАТЬ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтерни тăрăх, нимĕçсем грек халăхне Германие ĕçлеме ямашкăн е Грецирех ĕçлемешкĕн ирĕксĕр мобилизацилеме хăтланнă. Анчах грек халăхĕ çакна хирĕç питĕ вăйлăн тăнă. Мобилизаци тăвасси çинчен калакан пĕрремĕш декрет тухсанах Грецин çĕршывĕнче нумай çĕрте забастовкăсемпе демонстрацисем пуçланса кайнă. Массăллă патриотла движение грек халăхĕн питĕ сарлака сийĕсем хутшăннă, студентсемпе духовенство та хутшăннă. Афинăра пулса иртнĕ забастовка 2 куна пынă. Салоникăра грек халăхне партизансен отрячĕсене кĕме чĕнекен листовкăсем салатнă.

ЖЕНЕВА, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Нумаях пулмасть Çурçĕр Грецире нимĕçсемпе итальянецсен карательнăй отрячĕсем Фессалипе Македони хушшинчи районта партизансенчен тасатма хăтланнă. Темĕн чухлĕ хăтлансан та, вĕсем çав патриотла движение пĕтерме тăрмашни пĕтĕмĕшпех пăчланса ларнă. Çав районта пĕтĕмĕшпех партизансем чăнласах хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

ДЕТРОЙТРИ ĔÇСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 20-мĕшĕнче каçхине пĕр негрпа шурă çын тытăçса кайнă хыççăн Детройт районĕнче пысăк йĕркесĕрлĕхсемех пуçланса кайнă. 20 негрпа 3 шурă çынна вĕлернĕ. Хулара куçса çӳрес ĕç чарăнса ларнă, магазинсем нумайĕшĕ хупăннă.

Йĕрке кӳме США-н çар министрĕ Стимсон Детройта, Рузвельт хушнипе, хĕçпăшаллă вăйсем янă. Июнĕн 21-мĕшĕнче хулара чрезвычайнăй положени туса хунă. Çав йĕркесĕрлĕхсем вăхăтĕнче 700 çынна яхăн аманнă, вĕсем пуринчен ытла негрсем, 1.300 çынна яхăн арестленĕ.

Июнĕн 22-мĕшĕнче хулана йĕркене кĕртнĕ. Америка хаçачĕсем çырнă тăрăх, юлашки вăхăтра, Детройтри предприятисенче ĕçлекен негрсен шучĕ вăйлăн ӳссе кайнă май, Ку-Клукс-Клан тата фашистла е çурма фашистла ытти организацисем Детройтри халăх пухăш-кăмăлне негрсене хирĕç пăтратса яма хытă тăрăшнă.

Американецсен тата негрсен паллă деятелĕсен ушкăнĕ пичет представителĕсене заявлени панă. Унта çапла каланă: Детройтри ĕçсем Ку-Клукс-Клан тата «пиллĕкмĕш колоннăн» ытти представителĕсем хĕтĕртсе пуçласа янипе пулнă. Çапла хăтланса вĕсем халăхсен пĕрлĕхне хавшатасшăн, производство ĕçне чарса лартасшăн пулнă, тенĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇИ ИКĔ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ США-ра; АВСТРАЛИРЕ ТАТА КАНАДĂРА ПУЛСА ИРТНĔ МИТИНГСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн отечественнăй вăрçи икĕ çул тултарнă кун Чикагăра, Филадельфире, Балтиморта, Голливудра тата США-ри ытти хуласенче те çак вăрçăра Совет Союзне пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет организациленĕ митингсем пулса иртнĕ, митингсенче халăх нумай пулнă. Çавăн пек митингсем çак эрнере Нью-Йоркра тата ытти пысăк хуласенче те пулса иртмелле.

Чикагăри митингра 12 пин çын пулнă. Унта США-н почта министрĕ Уокер сăмах тухса каланă.

«Америка войскисем, — тенĕ вăл,— тăшман патнелле куçса, çывăхарса пыраççĕ. Вĕсем Россия икĕ çул хушши çав тери ăнăçлăн чăтса пынă йывăрлăха хăйсем çине илме хатĕр ĕнтĕ. Пирĕн пĕр тăшман пулса тăракан гитлерла Германие Россия чарса тăнă уйăхсем хушшинче пирĕн хамăр хĕçпăшала туптаса хатĕрлемелĕх вăхăт пулчĕ. Халĕ çав хĕçпăшал тăшмана çапса çĕмĕрме хатĕр ĕнтĕ». Россия агрессора чылаях юнсăрлатнине пула, тенĕ Уокер юлашкинчен, Америка салтакĕсем хăйсем умĕнче халĕ чылай вăйсăрланнă тăшмана кураççĕ.

СИДНЕЙ, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи вăрçи икĕ çул тултарнине Австрали общественноçĕ, Совет Союзне чысласа, нумай халăх пухăннă митингсемпе паллă туса ирттернĕ. Мельбурнри митингра 2.000 çын ытла пулнă, вĕсем хушшинче Австрали парламенчĕн членĕсем те пулнă.

Нумай халăх пухăнчă митингсем тата Сиднейра, Брисбенра, Аделаидăра, Ньюкастльре тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

ОТТАВА, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçи икĕ çул тултарнă май Монреальре июнĕн 22-мĕшĕнче митинг пулса иртнĕ. Митингра 8.000 çын ытла пулнă.

КĔСКЕН

▲ Итали влаçĕсем Сицилири пур пысăк хуласенчи халăха, çавăн пекех Неапольри халăха тата Сардинири мĕнпур хуласенчи пĕтĕм халăха июлĕн 10-мĕшĕччен урăх çĕре куçарса кайма приказ панă. Кама хушнă, çавсем анчах юлма пултараççĕ.

▲ Англире çĕнĕ йышши транспорт самолечĕсем туса кăларнă. Вĕсем 100 çынтан пуçласа 200 çынна çитиччен лартма пултараççĕ. Ку самолетсем 4 моторлă. Вĕсем 70 тонна туртаççĕ. Пĕрре вĕçсе кайма 23 тонна бензин илеççĕ, 6.400 километра çити каяççĕ.

▲ Германи хулисенче пассажирсен хула транспорчĕпе усă курас правине чакарнă. Трамвайпа тата автобуспа çар формин е ведомство формин тăхăнса çӳрекен çынсем кăна çӳреме пултараççĕ. Ыттисем вара ятарласа панă разрешени кăтартсан çеç хула транспорчĕпе усă курма пултараççĕ.

▲ Сант-Ягора (Чили) чи пысăк 10 кинотеатрта совет кинофильмĕсене «Украина хирĕсенчи партизансене», «Атăл-Атăл» тата ыттисене те кăтартаççĕ. (ТАСС).

СУД

ВĂРĂСЕНЕ АЙĂПЛАНĂ

Сиккассинчи (Канаш районĕ) Шмитд ячĕпе тăракан колхозри 6-мĕш бригадăн бригадирĕ Е. Вазинге, сеялкăпа акакан Н. Кузьмин тата вăрлăх туртаракансем Сыраева, Борисова çурхи тырăсене акнă чухне 9 пăт тулă вăрланă.

Çак ĕçе Канаш районĕнчи 3-мĕш участокри халăх сучĕ вырăна кайса пăхса тухрĕ. Кузьминпа Вазингене 5-шер çул, Сыраевăпа Борисовăна 3-шер çул хушши тĕрмере хупса усрамалла приговор йышăнчĕ.

Халăх сучĕн приговорне колхозниксем ырларĕç.

Пирĕн землякcем

Капитан Петров

Петров, Василий Петрович, Çĕрпӳ районĕнчи Первомайск ялĕнче çуралса ӳснĕ.

Шкулта вăл яланах аван вĕренетчĕ, пуринчен ытла математика предмечĕпе çав тери ăста вĕренетчĕ, çакă шире кăна мар, учителе те тĕлĕнтеретчĕ. Чипер ӳсрĕ вăл, чипер качча пулчĕ.

— Ман çар çынни пуласчĕ, эпĕ çар çыннисене питĕ килĕштеретĕп; вĕсене курсан, ман чĕре вырăнта тăмасть; мĕнле чаçе яраççĕ, çавăнта каятăп. Çар ĕçне юратакан çыншăн кирек ăçта та аван, тетчĕ вăл ӳссе çитсе пуçласан. Нумай шухăшланă, нумай ĕмĕтленнĕ вăл çар çынни пулас пирки. «Сывлăх пулсан, ĕмĕте пурнăçлатăпах, сывлăх кăна пултăр», тетчĕ вăл юлашкинчен.

Чăнах та Василий Петрович сывлăхлă пулчĕ. Хĕрлĕ Çар ретне юрăхлă çын пулчĕ. 1933 çулта вăл пĕррелĕш хут çара тухса кайрĕ.

Çар службине тултарса килсен, 1939-мĕш çулта каллех тепĕр хут çара кайрĕ. Унтанпа ĕнтĕ паянхи кунччченех Хĕрлĕ Çарта тăрать.

1941-мĕш çул. Гитлерла Германия Совет Союзне ултавлăн килсе тапăннă çул. Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсем çывхарса çитнĕ вăхăт.

Çавăн пек вăхăтра пĕрре Петров, Василий Петровича — разведчиксен ротин командирĕ—хăйĕн ротипе разведкăна кайма приказ илнĕ. Задани паллă пулнă, тăшмансен тылне кайса, пирĕн оборона линийĕнчен çирĕм çухрăмри пĕр пысăк мар яла вырнаçнă хура çĕлĕксен штабĕнчен кирлĕ сведенисем илсе килмелле. Çамăл ĕç мар, анчах пурнăçламалла.

Кăç пулнă Сентябрь çилĕ пĕр чарăнмасăр вĕрнĕ. Хушран-ситрен аякра пулемет сасси илтĕннĕ.

Петров лачакаллă вырăнсемпе вăрман витĕр хăйĕн разведчикĕсемпе çула тухса кайнă. Сывăх çул мар, çирĕм çухрăм каймалла.

Кун çурă утнă хыççăн унăн ротисем каçхине шăвăнса пырса ял çывăхнех çитнĕ. Никам та пĕр сас-чĕвĕ те кăларман.

Командир боецсене çав вăхăтрах мĕн тумалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Командир приказне никам нимĕн шарламасăр кĕтсе выртнă.

Сулхăн çил вĕрни, вăрман кашлани тата пĕр вĕçĕмсĕр вĕтĕ çумăр шĕрĕхсе тăни вĕсемшĕн нимĕн те пулман. Ыйхă çинчен шутлах те никам та шухăшламан. Кашнин пуçĕнче пĕр шухăшпа пĕр ĕмĕт кăна пулнă: командовани парса янă приказа хăюллăн пурнăçласси.

Ротăран иккĕн кайса урамри икĕ патруле «леш тĕнчене» ăсатса килчĕç. Васкамалла.

Шăп. Ниçта та пĕр сас-хура та илтĕнмест. Малтан каласса тапăлнă пĕрремĕш сигнална пачĕ Петров. Боецсем пурте малалла упаленсе пуçларĕç, кашнин аллинче граната. Иккĕмĕш сигнална пачĕ. Виççĕмĕшне парса ĕлкĕрчĕ çеç, Петров, кашни пӳрт çине граната сем ывăтма пуçларĕç. Умлăн хыçлăн мар, темиçешерĕн пĕр харăс кĕрĕслетсе çурăлаççĕ вĕсем.

— Малалла!—команда парать Петров.

Ак ялала нимĕçсемпĕн кĕтмен çамаша персе çитрĕ. Паникăна ӳкнĕ çĕленсем пĕрин хыççăн тепри урамалла сиксе тухаççĕ, хăшĕ кантăкран, хăшĕ алăкран. Пурте ă ити кĕпе вĕççĕн. Анчах урама сиксе тухнă-тухманах вилĕм персе çитет вĕсене, халăх ылханĕ тĕнче ылханĕ çĕр çинчен шăлать вĕсене. Вăхăт питĕ сахал иртрĕ. Пĕтĕмпе те 15 минута çеç çапăçрĕç. Тăшманăн икçĕр вилли ытла урамра кирлĕ выртса юлчĕ.

Командир панă задани пурнăçа кĕрет, анчах халь тăшман тылĕнчех-ха вĕсем. Хамăрăннисем патне çирĕм çухрăм каялла тухмалла. Ку та çăмăл ĕç мар, йывăр ĕç, çавăнпа та задани пурнăçа кĕчĕ темесĕр-ха Петров, кĕрет тесе çеç шухăшлать.

Чăнах та, ял патĕнчен пĕр çухрăма яхăн кайнă, вĕсен хыçĕнчен вут-çулăм сӳнсе кĕрлеме те тытăнчĕ. Анчах Петровăн пĕр боец кăна аманнă, ăна та разведчиксем хăйсемпе пĕрле илсе тухнă, тăшман мăшкăлне хăварман. Петров хăйĕн ротипе кĕрхи каç вăрмана кĕрсе ӳкме ĕлкĕрнĕ.

Малалла васканă вĕсем, мĕнле те пулин çитес, тенĕ. Вĕсен аллинче темĕн чухлĕ кирлĕ сведени, темĕн чухлĕ кирлĕ документ тата нимĕç штабĕн ялавĕ пулнă.

Тепĕр ирхине рота командирĕ командовани патне çитнĕ те кĕскен çапла рапортланă:

— Начальник юлташ! Командовани парса янă приказа пурнăçларăмăр. Хаклă сведенисем тата штаб ялавне илсе килтĕмĕр. Ротăра пĕри аманчĕ, вилнисем çук. Вĕсен икçĕр вилли ытла выртса юлчĕ,—тенĕ.

* * *

1942-мĕш çул, ноябрь уйăхĕ. Разведчиксен ротин командирĕ Петров командованирен тепĕр приказ илет.

— Тăшманăн вăй мĕн чухлĕ, вăл ăçта тăрать, хăш флангран кĕçĕр е ситес ир наступлени пуçарма шуглать пĕлмелле. Пĕр çăмахпа каласан, кĕске вăхăт хушшинчех «чĕлхе» илсе килмелле.

Задани паллă. Ăна пурнăça кĕртмелле.

Каç пулчĕ. Кĕрхи сăра пĕлĕтсем галккипех капланса тăраççĕ. Петров каллех хăйĕн боецĕсемпе разведкăна тухса кайрĕ.

Икĕ енче те вăрман каплаça ларать. Варринче шоссе çулĕ çип çапнă пек тăсăлса выртать. Петров хăйĕн боецĕсене пурне те пĕр карта туса çулăн икĕ енĕпе вырттса тухма команда пачĕ.

Çак çулпа ĕнтĕ нимĕçсен машинисем иртсе çӳреççĕ. Вĕсем кунтан инçе мар тăраççĕ пулин те, нимĕнле сас-хура та илтĕнмест.

Пĕр сехет иртет, тепре иртет, анчах нимĕнле машина та, нимĕнле çын та иртсе çӳрени çук-ха. Пирĕн боецсем мар, Петров хăй те тарăха пуçларĕ. «Кĕтнĕ чух килмеççĕ тата», терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Çук, кĕтни сая каймарĕ. Тул çути килес умĕн пĕр çăмăл машинăпа икĕ мотоцикл çулпала килсе пирĕн картапах кĕрсе ӳкрĕç. Петров фоти вĕсене тытса чарчĕ. Машинăсем çинче подполковник, обер-лейтенант тата шоферсăр пуçне тăватă салтак ларнă.

Подполковнике «чĕлхе» туса пирĕн чаçе илсе килнĕ, ыттисене пирĕн разведчиксем тирпейлесе хăварнă. Задани пурнăçланнă.

* * *

Петров, Василий Петрович, нумай пулмасть хăйĕн тăван ялне çитрĕ. Вăйлă аманнă пирки самай вăхăт хушши ăна госпитальре выртма тивнĕ.

Яла таврăннă каçах ăна курма, унпала калаçма унăн тăванĕсем, пĕрле ӳснĕ юлташсем, кӳршĕ çыннисем пухăнчĕç. Вăл пирĕн Хĕрлĕ Çар воинĕсем нимĕç захватчикĕсемпе мĕнле паттăррăн çапăçни çинчен; нимĕç çынçиенĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ вырăнсенче асса, пирĕн мирлĕ халăхран мăшкăлланни, пулни, ĕмĕр иртмен иксĕр ĕçсем туни çинчен каласа парать.

Вăт хальь капитан. Унăн кăкри çинче Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе «За отвагу» медаль йăлтăртатса çуталса тăраççĕ.

Иван МАЛГАЙ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкар хула совет исполкомĕ çакна пĕлтерет: вутă хатĕрлеме каякан граждансемпе учрежденисене пурне те Шупашкар хула совет исполкомĕ пĕр çулталăка кирлĕ чухле **вутă парать.** Ăна Атăл леш енче чĕренче заводĕ районĕнче илмелле: Атăлăн сылтăм енчен вутă памаççĕ.

Шупашкар хула совет исполкомĕ.

ЧĂВАШСЕН ЯЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ 1943—44 вĕренӳ çулĕ валли агрономи тата зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне **студентсем илесси** çинчен пĕлтерет. Института вĕренме кĕме паракан заявленисемпе пĕрле вĕренни çинчен калакан аттестата тата автобиографие çак адреспа ямалла:

Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 34-мĕш номерлĕ çурт, Ялхуçалăх Институчĕ, приемнăй комисси.

Заявленисене илме тытăннă, август уйăхĕ пĕтиччен илеççĕ.

Института кĕме тытмалли экзаменсем сентябрь уйăхĕн 15-мĕш числинче пуçланаççĕ, 25-мĕшĕнче пĕтеççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Государственнăй повеиритель должноçне йышăнма работниксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Октябрьски урам, [illegible]-мĕш номерлĕ çурт. Телефон 4—22.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ:** редакторăн — 0—67. редакци секретарĕн—4—26. парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

[illegible] при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.